Юрий СЕМЕНТЕР

# ХУРАСАН ХАПХИ

*В Хороссане есть такие двери*
Сергей ЕСЕНИН

✧✧✧

Мĕншĕн тухрăм, мĕншĕн утă утрăм,
Мĕншĕн эп шăратрăм çак юрра?
Ма тесессĕн шăнкăр шывлă Сурăм
Ылтăн кĕвĕ хыврĕ чунăмра.

Кăнтăр çилĕ ылтăн çăлтăр сапрĕ,
Авăнса пуç тайрĕç çĕмĕртсем.
Яш чĕрем вĕри çăлкуç пек тапрĕ,
Акăш евĕр вĕçрĕç ĕмĕтсем.

Иртеймерĕ ăшăмри пăлханăç
Сурăм хĕрĕн илемне курсан.
Пуçăмра пăтранчĕ тухăç-анăç,
Асăмран тухмарĕ Хурасан.

Çулсăр-мĕнсĕр ту çине хăпартăм,
Çулсăр-мĕнсĕр антăм айлăмне.
Ăнтăлать те туртăнать çунатăм
Çитересшĕн Шетмĕ саламне.

Шетмĕсем те Сурăмсем юхаççĕ
Малалла пĕр Мăн Çавал пулса,
Юх, сăмахăм, вĕçтерсем, çăрхаçăм
Шухăшу сан сывлăм пек таса.

Никама та эс усал сунмастăн,
Ырăпа çӳретĕн, ырăпа,
Тĕнчене савса сума сăватăн,
Çупăрлатăн çепĕç юрăпа.

✧✧✧

Хурасанăн хурăн, ай, хапхине
Икĕ пăрăс янă ик енчен.
Шетмĕех те енĕн ачине
Сурăм енĕ хапăл мар иккен.

Кам кунта эп? Эп – ют ял каччи,
Пурпĕр пулас марччĕ çич ютах,
Шăпăрпа шăлан шăпам хаччи
Ан касинччĕ ырă вăхăта.

Мĕн вара? Хапхийĕ кĕртмесен
Кĕрĕп анкарти алăкĕнчен,
Е, унтан та майĕ килмесен,
Тухăп çаврăнса пĕве енчен.

Ылтăн çĕрĕ евĕрлĕ хĕре
Пăхаясчĕ çĕмĕрт куçĕнчен:
Мĕн сунать çав çĕмĕрт куç пире,
Пур-и шанăç унăн хĕмĕнче?

Хурасанăм, хаклă Хурасан,
Кăмăлу сив кăмрăк мар-тăр сан,
Çăлтăрсен вăйййи екки ярсан
Çăлтăр евĕр хапхуна уçсам.

Чимĕр! Хурăн алăк ик енне
Сас памасăр кайрĕ уçăлса!
Хампала пĕр шутлă тӳпене
Куç хĕсетĕп пуçăма тайса.

✧✧✧

Туй тăвать
Тӳпере çăлтăр халăхĕ,
Каçхи çил вĕркĕçлет кăкăра.
Ал паратăп сана, хапха алăкĕ,
Эс умра тантăш пек тăнăран.

Хăш лаçра-ши
Туптаннă йĕс хăлăпĕ,
Хăш ăста шăрçаланă ăна,
Икĕ паттăр юпи, сарă сăлăпĕ –
Пурте çывăх пăлхавăр чуна.

Хăлăпа
Саккăр тытăп-и, тăххăр-и,–
Пĕçертет, вăй кĕртет вăл алла,
Ма тесессĕн, ăна ĕмĕт çăлтăрĕ –
Сывлăмпи – кашни кун ачашлать.

Çавăнпа та,
Хапхам, эпĕ канăçсăр,
Тек йĕрлеп сарпике йĕррине,
Те курап, те курмас – килтĕм шанăçсăр,
Курмасан – эс пуç тай ирхине.

✧✧✧

Сывлăмпиçĕм, уйăх сăнлă иçĕм,
Эсĕ чăн та сывлăм шăрçиех.
Сывлăмпа чунра çиçтертĕм çиçĕм,
Пухрăм эпĕ ылтăн пĕрчине
Çакрăм эпĕ Сурăм ĕнчине.

Сывлăмпиçĕм, çутă сурăмпиçĕм,
Шурăмпуç сенкер кавир тĕрлет.
Икĕ куçунтан пăхатăп вĕçĕм,
Сарă çу пек чунăм ирĕлет,
Мал енчи тĕтре те сирĕлет.

Сывлăмпиçĕм, вутлă шурăмпуçăм,
Ан вĕçерт, тархасшăн, аллуна.
Ăçтарах-ши сирĕн Сурăм пуçĕ?
Тен, шырар çăлкуçлă вырăна,
Çавăнта кĕтер-и çĕн куна?

Сывлăмпиçĕм, кĕлчечек çыххиçĕм,
Юмахри пекех асамлă ир,
Парнелет çак ир пире, савниçĕм,
Сывлăша вĕçме çемçе кавир,
Ик енче сапса пырать сапфир.

Сывлăмпиçĕм, улмуççи çеçкиçĕм,
Сурăм хумĕ хĕрлĕ те кĕрен.
Кăкăрта ман тĕвĕленчĕ сисĕм:
Эс Шетме – çĕн çын пулса кĕрен,
Шурăмпуç сенкерлĕхĕпелен.

## «КЕ» ТАКМАКĔ

Шывĕсем юхаç-и-ке,
Пĕвисем тулаç-и-ке,
Эпир такмак каланишĕн
Кăмăлсăр пулмаç-и-ке.

Пăтьăр-пăтьăр путени
Мĕншĕн авăтмасть-ши-ке,
Эп савса кĕтекенни
Ма çаплах тухмасть-ши-ке.

Икĕ пуспа виçĕ пус
Çапăнаймĕç-ши вара,
Чунтан савнă икĕ тус
Пĕрлешеймĕç-ши вара,

Сулахайпа сылтăмне
Ылмаштарас мар-и-ке,
Çӳл тӳпери ылтăнне
Татса илес мар-и-ке.

Çавал юхать çаврăнса,
Выла юхать вылянса,
Сурăм шывĕ сулăнасран
Хăрамасть-ши Хурасан?

Сурăм шывĕ сулăнмасть,
Хурасан та хăрамасть:
Ман юратнă чун савни
Нихăçан та сутăнмасть.

Шывĕсем юхаç-и-ке,
Пĕвисем тулаç-и-ке,
Эпир кунта ташланишĕн
Кăмăлсăр пулмаç-и-ке?

✧✧✧

Çӳреймен кунта Сергей Есенин,
Хурасанӑн хапхине уçман,
Вӑл кунта сукмак хывма пилленӗн
Çӗкленсе юрлассӑм килчӗ ман.

Вирьялсенӗн хӗрӗсем вир акнӑн,
Сарӑ вӑрлӑх сапнӑн çӗр çине,
Васанкка пиччем калан такмакӑн
Такмакласcӑм килчӗ кӗр енне.

Тав сана, им-сим сӗнен Синерӗм,
Ылтӑнсем сан йышунта – çур ял.
Микулайӑн, Аркатин йӗнерӗ
Пегаса кӳрсе тӑрать хавал.

Умӑмра – Харлампьевпа Тукташӑм,
Халӑхра – Артемьев çаврисем,
Е Лукин пуçарнӑ юрӑ-ташӑ,
Е Ястранӑн кӗмӗл кӗввисем.

Чулкаç енӗн чунлӑхне юратрӑм,
Кӑмӑлларӑм Галкин сассине,
Питӗ шел: ытла та ир ӑсатрӑм
Хветӗре Шӗмшеш çӑви çине.

Мӗн тӑвас: килетпӗр те – каятпӑр,
Ӗмӗрсем – хӑналӑх пек кӑна.
Çавӑнпа та пурӑнасчӗ сапӑр,
Хӑтарасчӗ  çылӑхлӑ чуна.

Хурасанӑм! Хусанкай хӗлхемӗ
Сар шевле пек вӗлкӗшет кунта.
Ун сӑмахӗн ылтӑн пуçилемӗ
Йӑлтӑрать сӑваплӑ вырӑнта.

Элӗк, эс кӳретӗн çӗн кӗвелӗк

Чĕрери хĕвеллĕх ырсемне.
...Хурлăханăн кăтартать пуçелĕк
Хурасан пикин çырла сăнне.

✧✧✧

Ай, вылять-çке çилĕ, çилĕ – çил çунат,
Утма çул хĕп-хĕрлĕ, калан, çул çунать.

Ăвăса вут хыпнă, хурама – кăвар,
Çук, чĕрем çунать ман, кĕрхи йывăç мар.

Тен, каччу та пур-тăр, савнă Сывлăмпи,
Тен, пĕр урамрах-тăр пурнăçун шăпи?

Юрату вăл – суккăр, юрату – курмасть,
Пĕр çиçсессĕн çиçĕм канлĕхне памасть.

Çулçă пек вĕçетĕп кĕр ытамĕнче,
Хĕр сăн-пичĕ çывăх, утас çул – инçе.

✧✧✧

Хурама хӗм сапсан
Палана вут хыпсан,
Кайӑк хур кӗр юрри юрласан,
Кӗмӗл каҫ хуралсан,
Ҫӑлтӑрсем хӑпарсан
Хапхуна пуҫ таяп, Хурасан.

Хурасан, Хурасан,
Анатри тарасан
Янкӑр куҫӗ сӑнать таврана.
Тусӑм эсӗ тухсан,
Эпӗ хирӗҫ утсан,
Систерминччӗ вӑл урӑх ҫынна.

Систерсен те тем мар,
Пуҫ усма ан васкар,
Сум илеймӗн тӳрех хӑрасан.
Вӑюпа пул патвар,
Сӑмахпа та кастар,
Ҫапла мар-и, хастар Хурасан?

Ҫӑлтӑрпа ҫӑлтӑра
Ҫӳл тӳпе пил парать
Пӗр хӗмпе, пӗр сӗмпе ҫуталма.
Ҫӗр ҫинчи мӑшӑра
Пиллӗх ҫук-и вара
Ҫӑлтӑрпа ҫӑлтӑр евӗр ҫунма?

Эп сана юратсан,
Эс мана юратсан
Ылтӑн ҫӗрӗ ҫыхать ик чуна,
Хӑнуна ӑнланса,
Хӑнуна ыр сунса,
Хурасанӑм, уҫсам хапхуна.

✧✧✧

Лайӑх астӑваççӗ Тигрпа Ефрат:
Чаплӑ пулнӑ теççӗ шумерпа аккад.

Ту енне çул тытнӑ, Турӑ сас парсан,
Вавилон чӑвашӗ паттӑр Хурасан.

Çӗрӗсем чӗтреннӗ, ишӗлнӗ тусем.
Пурпӗр чӗрӗ юлнӑ парӑнми туссем.

Асамат та Писӗп, Тукташпа Иштек
Хурасаншӑн пулнӑ шанчӑк та тӗрек.

Паттӑрсем сертелӗх ӗшнине çитсен
Ӳлӗм çакӑ пулӗ, тенӗ, пирӗн ен.

Танлӑн юмахланӑ ӑрӑмсен çӑрхи –
Хамӑр ял ӑсчахӗ шур сухал Урхи.

Ан пӑлханччӗ, Тигр, ан хумхан, Ефрат,
Иртнине тархасшӑн халӗ ан вӑрат.

✧✧✧

Сывлӑмпиҫӗм, Сывлӑмпи... Рязань ен ҫӗршывӗнче
Хӗвел чунлӑ сӑвӑҫ пулнӑ иртнӗ ӗмӗр пуҫӗнче.
(Рязань ен ҫӗршывӗнче иртнӗ ӗмӗр пуҫӗнче.)

Кӗл чечек пекех ешернӗ ун таланӗ сӑвӑра,
Кӗввипе Сергей Есенин ҫеҫке ҫурнӑ раштавра.
(Ун таланӗ сӑвӑра ҫеҫке ҫурнӑ раштавра.)

Хороссан хулин мухтавӗ – иҫӗм куҫлӑ Шаганэ...
Вырӑс поэтне ҫунтарнӑ уйӑх питлӗ пукане.
(Иҫӗм куҫлӑ Шаганэ  уйӑх питлӗ пукане.)

Хороссанӑн сумӗ килӗ халь чӑваш Хурасанне...
Хурасан кӗҫ хулӑм ыйтӗ, мӗн хакне хурас, анне?
(Халь чӑваш Хурасанне мӗн хакне хурас, анне?)

Уҫайман хапха Есенин, тупайман ҫӑра уҫҫи,
Сывлӑмпи,  мал  ен  малашӗ  –  иккӗн
тупнӑ ярнуҫҫи.
(Тупайман ҫӑра уҫҫи – иккӗн тупнӑ ярнуҫҫи.)

Фирдоуси те Саади шӑрантарччӑр кӗввине,
Юратун таса сӑвапӗ ҫыхтӑр пурнӑҫ тӗввине.
(Шӑрантартӑр кӗввине – ҫыхтӑр пурнӑҫ тӗввине.)

# ШЕТМĔ ТАШШИ

Çăка миçе, йăмра миçе,
Шута илсе тухар-и,
Хурасанăн урамĕнче
Шетмĕ кĕвви калар-и.

Хĕрĕ миçе, каччи миçе,
Пĕррĕн суса тухар-и,
Сурăм шывĕ, ай, умĕнче
Шетмĕ кĕвви пуçлар-и.

Урăм тесе, сурăм тесе
Сурăм шывне тиркес мар.
Уйрăм тесе, суйрăм тесе
Сурăм хĕрне хурлас мар.

Симĕс пурçăн çич хăлаç,
Çиччĕшне те илтĕмĕр,
Аюк тесе ан калаç, –
Паллашмашкăн килтĕмĕр.

Кантăр татрăм утмăл çурăм,
Сылтăм аллăм ывăнчĕ,
Сурăм хĕрне сума сурăм –
Утма çулĕ хывăнчĕ.

Шыв хĕрринчи сукмакне
Кĕмĕл уйăх çутатать,
Шетмĕ каччин такмакне
Сурăм хĕрĕ юратать.

Хăш ен çынни пит патвар?
Шетмĕ çынни пит патвар!
Четрикĕсем четвĕрт пек те
Упа çырми упа пек.

Ик улмуççи туратне
Сыпăнтарма пулмĕ-ши,
Шетмипеле Сурăмне
П.рлештерме пулм.-ши

✧✧✧

Сурпан евĕр выртан Сурăм шывĕ
Кам пуçне çĕн илем кӳрĕ-ши,
Хăш поэт сан çинчен юрă хывĕ,
Мĕнле юрăç ăна юрлĕ-ши?

Сывлăмпи, çав юрра ман хывасчĕ,
Юрлаясчĕ ăна хамăнах.
Сурпан вĕçĕн хĕлхемлĕ хăвачĕ
Туй çитсен ерешлетĕр мана.

Хĕрĕх хĕлĕх тата çитмĕл чĕлĕх
Янăраччăр-и пирĕн туйра,
Шупăру – çитмĕл çич пĕрмечелĕх,
Пурнасси – çитмĕл çич çул умра.

Хурасанăн хапхи – çич эрешлĕх,
Çич ăста эрешленĕ ăна.
Шăратсам, хĕрлĕ питлĕ пилешлĕх,
Униче хĕрринчи юрруна.

Шăратсамччĕ сурпанлă-масмаклă
Арăм йышĕ пек харăс тăрса,
Çакăнтан эп кĕретĕп сулмаклăн
Хурасанăн кĕрӳшĕ пулса.

✧✧✧

Курăнмаççĕ çурçĕрĕ, кăнтăрĕ,
Кайăк хур çул тытать ăшша.
Кĕреке хатĕрлет кĕр мăнтăрĕ,
Тав тăвать маттур чăваша.

Ӳркенмест ĕçĕнче Элĕк тăрăхĕ,
Сурăм хумĕ пекех васкать.
Çилĕ-тăвăлĕ, тăмĕ, шăрăхĕ...
Çын пурне те тӳсет, чăтать.

Ан шиклен, Сывлăмпи... Пулĕ пирĕн
Çеçкери çуркунне, ылтăн кĕр,
Хăтлăх-хӳтлĕх кӳрĕ каç-ирĕн
Иккĕн лартнă кĕрнеклĕ çурт-йĕр.

Шетмĕсем те вăй-хал шеллемĕç,
Шетмĕсенĕн те шет çук мар.
Кам наян та мăран – вăл кĕлмĕç,
Кĕлмĕçе,туссем, ан тухтар.

Акисен, сухисен сĕвемĕ
Ан кайинччĕ, туссем, алран.
Сывлăмпиçĕм, эс – пурнăç элемĕ,
Пурте пулĕ эпир пулсан.

2001